## Сывă пурнăç йĕркишĕн

# Айăпĕ эрехре-ши?..

### Ĕмĕр иккĕ килменнине ăнланасчĕ...

Пăхар-ха йĕри-тавралла. Эрех кĕмен, вăл инкек яман пĕр вырăн та пулсан пур-и паян? Сирĕн ялта паян миçе çемьере ўсĕр упăшка арăмне хĕнет? Миçе çемьере паян миçе ача амăшĕ ĕçке ернине пула тăраниччен çисе кураймасть? Ўсĕр водитель айăпне пула çулсем çинче миçе çыннăн пурнăçĕ татăлчĕ кăçал? Пуçа эрех-сăрапа минретнĕ хыççăн миçе çын преступлени çулĕ çине тăчĕ? Сирĕн ялти миçе килте паян çак усал шĕвеке сутса укçа тăваççĕ, çын куççулĕ çинче пуяççĕ?.. Çав эрехе пулах миçе çыннăн пурнăçĕ татăлчĕ? Миçе хĕр ачапа арçын ача ашшĕсĕр е амăшĕсĕр юлчĕ? Йăлтах эрех айăплă. Эрехре-ши айăпĕ? Хамăртах пуль. Никам та ăна пире карланкăран тытса ямасть вĕт. Тен эрех кўрекен инкексем, тĕслĕхсем çинче тĕплĕнрех чарăннипе кам та пулин черкке енне тăснă аллине илме пултарĕ. Тен кам та пулин çак усал йăларан хăтăлма вăй çитерĕ? Çакна шанса, çак тĕллевпе уçма шутларăмăр та çак çĕнĕ ярăма. Калаçăва вара районти тĕп больницăран пуçлани вырăнлăрах пулĕ. Мĕншĕнне вулакан хăех чухлать пулĕ... Карланкăна чарманни больница койки çине илсе çитерет. Ку вăл, çапла тума ĕлкĕрсен...

### Юмахра çеç вилнисем чĕрĕлеççĕ

Арçын словарьте çук сăмахсемпе перкелешме пуçларĕ... Урамра пулсан, тен «Мĕн эсир, хăвăра йĕркеллĕ тытсан аванччĕ» теекен тупăннă пулĕччĕши? Кунта вара районти тĕп больницăри реанимаци палатинче ĕçлекенсем кун пек сценăна курма хăнăхнă ĕнтĕ.

– Ну-у-у, халь пурăнать ĕнтĕ, – лăш! сывласа ячĕç вĕсем хальхинче те.

Эрехпе е спирт пур тĕрлĕ суррогатпа наркăмăшланнă çынна вилĕм алăкĕнчен туртса илнĕ хыççăн чăннипех те хĕпĕртемелли çеç юлать çын çапла майпа тепĕр хут «çуралнишĕн».

Анчах хăйсем савăнма пĕлеççĕ-ши вĕсем çаканшăн? Тĕрĕс пĕтĕмлетў тăваççĕ-ши?.. Эрехе пула больницăна лекнĕ çынсен йышĕ ўссе пынине шутласан, эрех ĕçме пăрахатпăр теме çукха. Больницăна çынсен 80 процентчĕ эрехе пула лекет. Пĕри ўсĕрле ўксе сăрăннă, теприн нумай вăхăт ĕçнине пула пĕверĕ чире кайнă. Виççĕмĕшĕ мухмăрла эрех тесе уксус ĕçсе лартнă ... Ку тĕслĕхсене малалла та тăсма пулать. Г.Н. Кузнецова анестезиолог-реаниматолог каланă тăрăх, кăçалхи 5 уйăхра реанимаци уйрăмне лекнĕ 197 çынран 10-шĕ вилнĕ. Вĕсенчен 5-шĕ – алкоголь суррогачĕпе питĕ йывăр наркăмăшланнипе. 3-шĕ нумай вăхăт эрех ĕçсе пурăннипе йывăр чирленĕскерсем пулнă.

–Эрех-сăра чи малтанах пĕвере, пўрене, чĕрепе юн тымарĕн системине сусăртать. Пирĕн условисенче больницăра эпир чĕрепе юн тымарĕн системине, пўрене йĕркеллĕ ĕçлеттерсе яма пултаратпăр. Анчах та хытă сусăрăннă пĕвере çĕнĕрен ĕçлеттерсе яма йывăр. Уйрăмах техника спиртне, тĕрлĕ суррогата ĕçни çакăн патне илсе çитерет. Юлашки çулсенче çак сăлтава пула çăлса хăварайман тĕслĕхсем пулкаларĕç, – хаш! сывлать Галина Николаевна.

Шел пулин те, медицина та юмахри пурне те çăлакан пирĕшти мар çав. Çакна вара темшĕн ăнланасшăн мар спирт пур пăтранчăк шыва ĕçекенсем. Хăйсене вилĕм аллинчен туртса кăларма больница мĕн чухлĕ укçа тăкакланине те, врачсемпе ытти медицина ĕçченĕсем хăйсен пурнăçĕшĕн çĕрне-кунне пăхмасăр кĕрешнине те. Реанимаци уйрăмĕнче 1-2 кун хушшинче (ку вăл тарăна кайнă чир çук чухне. Калăпăр, ўсĕрле çĕр çинче нумай выртнă хыççăн ўпке шыççи тупăнсан е урăх чир пулсан, ку процесс вăрăма каять-çке) вĕсенчен çĕнĕрен «çын тунă» хыççăн малалла больницăн терапи е урăх уйрăмĕнче сиплеççĕ.

Иртнĕ çул нумай вăхăт эрех ĕçнĕ хыççăн хырăмай парĕн чирĕн йывăр формипе чирленĕ пĕр çынна сыватма кăна районти тĕп больницăн 38 пин тенкĕ укçа тухса кайнă. Сывалнă хыççăн тĕрĕс пĕтĕмлетў туса хăй сывлăхне упраса пурăнсан юрать-ха. Çук вĕт. Çакăн пек тĕслĕхсем те пĕрре кăна мар пулаççĕ.

–Темиçе çул каялла пулчĕ ку тĕслĕх. Тăнне çухатнăскерне илсе килчĕç пирĕн пата. Организмне эрехпе наркăмăшланнинчен тасатса интенсивлă терапи процедурисене йăлт туса иртертĕмĕр. Ирхине тăна кĕрсен больницăран тухса тарнă. Эп дежурстăвран киле таврăннă чухне вăл столовăй умĕнче тăрать. Каярахпа, кăштах вăхăт иртсен, вăл вилнĕ тенине илтрĕм.

Малтан ăна шăпа тĕрĕс пĕтĕмлетў тума шанса панă пулсан, хальхинче ăна больницăна çитме те пўрмен иккен. Кунта Гиппократ каланине илсе кăтартни вырăнлă пек туйăнать: «Чирлĕ çыннăн тухтăрпа пĕрле хăйĕн сывлăхĕшĕн кĕрешмелле». Çапла тумасан ĕç-пуç мĕнпе вĕçленме пултарнине кăтартакан тĕслĕх халь анчах пулчĕ.

Инсульт пулнисенчен ытларахăшĕ – каллех нумай вăхăт эрех ĕçекенсем. Юн пусăмĕ хăпарнинчен вĕсем килте эмел ĕçмеççĕ. Çапла майпа çакă пуç мимине юн каясси патне илсе çитерет.

Больницăра ĕçлекенсем унта лекнĕ çын миçе кун ĕçменни çинчен ыйтсан, мăшăрĕсем çапла хуравлаççĕ:

– Халь ĕçменччĕ-ха.

– Миçе кун ĕçмен?

– 3 кун.

– ?..

Çав 3 кунччен эрехпе иртĕхни мĕн патне илсе çитернине ăнланасчĕ кашнин. Эрех ĕçни инкекпе вĕçленнине пĕлсе тăрсах çав тарăн варалла утас марччĕ.

Л.М. Иванова нарколог каланине те шута илесчĕ:

– Нумай вăхăт эрех ĕçсе пурăнакансем япăх илтме, япăх курма пуçлаççĕ. Вĕсен алкоголь психозĕ пуçланать. Вĕсене кĕтмен çĕртен операци тумалла пулсан, вĕсем валли наркоз мĕн чухлĕ памаллин шайне те суйласа илме йывăр. Çывăх тăвансене хуçса хăварас мар тени тен пурнăç пĕлтерĕшĕ çинчен аса илтерĕ çакăн йышшисене.

Медицина вăйлă паян. Кăна эпир пĕлетпĕр. Анчах та вăл вилнĕ клеткăсене чĕртейменнине пирĕнтен кашниех лайăх ăнланать. Çавăн пекех никама та шутламан пуç вырăнне шутлаканнине лартса парайманнине те. Çавăнпа та хамăрăн пур пуçа ĕçлеттерсех тĕрĕс пĕтĕмлетў тăвасчĕ. Калаçăва Гиппократ шухăшĕпех вĕçлес килет. Пĕрмаях савăклă пурнăçпа пурăнни чирлесси тата пăсăласси патне илсе пырать. Вăл е ку тĕллев патне ăнтăлни вара пурнăça çирĕплетме пулăшакан вăй парать.

Чăнах та, çирĕп сывлăхлă та телейлĕ пурăннине мĕн çиттĕр? Никам та çĕр çинче вĕçĕмсĕр пурăнмасть вĕт. Кĕске ĕмĕре йĕркеллех пурăнса ирттересчĕ.

**Л.ТУКТИНА.**

## Спорт хыпарĕсем

**Чупасси.** Майăн 14-мĕшĕнче Шупашкарта «Олимпийский» стадионта шоссе çинче чупассипе Олимп чемпионкин В. Егорован парнисене çĕнсе илессишĕн республика ăмăртăвĕсем иртнĕ. Унта Муркашри В. Егорова ячĕпе хисепленекен ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн команди те хутшăннă. 1990–1991 çулсенчи яшсем хушшинче 3 километрлă дистанцире Çатракасси шкулĕнчи Александр Скворцов 3-мĕш, Муркаш шкулĕнчи Леонид Трофимов 4-мĕш, Çатракасси шкулĕнчи Никита Никитин 5-мĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ.

1996–1997 çулсенче çуралнă хĕр ачасем хушшинче 1 километрлă дистанцире 23 спортсменка хушшинче Вăрмар тата Красноармейски спортсменкисене çеç мала ирттерсе Тойкилтĕ шкулĕнчи Надежда Федорова (3-мĕш вырăн), Çатракасси шкулĕнчи Настя Ксенофонтова (4-мĕш вырăн), Муркаш шкулĕнчи Катя Федорова, Çатракасси шкулĕнчи Настя Бармиловапа Ирина Лебедева палăрнă.

**А. ПЕТРОВ,**
**Муркашри В. Егорова ячĕпе хисепленекен ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн директорĕн вĕрентўпе воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумĕ.**

**Маунтинбайк.** Майăн 24-мĕшĕнче Вологда хулинче маунтинбайк енĕпе Раççей кубокĕн 5-мĕш тапхăр ăмăртăвĕсем иртнĕ. Асăннă ăмăртусене Чăваш Республикин команди шутĕнче В. Егорова ячĕпе хисепленекен ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн Оринини уйрăмĕн выпускници Людмила Филиппова та хутшăннă, 2-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. Ăна кĕмĕл медальпе саламлатпăр тата спортра малашне те ăнăçусем сунатпăр.

**Хăвăрт утасси.** Майăн 28-мĕшĕнче хăвăрт утассипе Етĕрне районĕнчи Килтĕшре шкул ачисем хушшинче республикăра мала тухса тава тивĕçлĕ спорт мастерĕн А. Иванован парнисене çĕнсе илессишĕн 3-мĕш тапхăр ăмăртăвĕсем иртнĕ. Унта Муркаш районĕн команди те хутшăннă. Вĕсем шутĕнче, тĕпрен илсен, В. Егорова ячĕпе хисепленекен ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнчи вĕренекенсем пулнă. Кусем вĕсем Тойкилтĕ шкулĕнчен.

Вĕсем япăх мар результатсем кăтартнă. Акă 1998 çулта тата хыççăн çуралнă арçын ачасем хушшинче Роман Юсупов 1 километрлă дистанцие пуринчен малтан утса тухнă. Çак дистанцирех хĕр ачасем хушшинче Анжела Федорова 2-мĕш пулнă. 1992–1993 çулсенчи яшсем хушшинче Роман Емельянов 3-мĕш результат кăтартнă.

Кунпа пĕрлех 1998 çулта тата хыççăн çуралнă арçын ачасем хушшинче 1 километрлă дистанцире çăмăл атлетика кросĕ иртнĕ. Унта 1 километрлă дистанцире Андрей Петров çĕнтерўçĕ пулса тăнă, командăри унăн юлташĕ Валерий Федоров дистанцире 3-мĕш пулнă. Хĕр ачасем хушшинче вара Наташа Порфирьева 2-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

Спортра пысăк çитĕнўсем тунă пур çамрăк спортсменсене те тав сăмахĕ калатпăр.

**М. СИДОРОВ,**
**инструктор-методист.**

## Прогноз погоды с 6 июня по 14 июня

www.yandex.ru

| сб 6 | вс 7 | пн 8 | вт 9 | ср 10 | чт 11 | пт 12 | сб 13 | вс 14 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| переменная облачность, небольшой дождь | ясно | переменная облачность | переменная облачность | переменная облачность, небольшой дождь | ясно | переменная облачность | дождь | дождь |
| +22 | +21 | +26 | +30 | +30 | +25 | +23 | +29 | +19 |
| +12 | +9 | +16 | +17 | +16 | +11 | +13 | +16 | +12 |

## Пĕлтерўсем. Объявления

Продается ячмень. Доставка. Тел.: 8-919-679-96-97. 3-3.

МОЖНО КУПИТЬ: вагонку, двери, окна, пол, плинтус, наличник, перила, балясины, брусок, обрешетку (работаем на заказ). Все для бани.
Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, 2, рядом с налоговой. Тел.: 8-905-345-41-67. Андрей. 9-12.

Продаем доски хвойные любых размеров, обрезные и необрезные. А также срубы любых размеров. Цены ниже рыночных. Тел.: 8-903-379-62-17, 8-927-847-23-38. 3-5.

ИП Ершов А.В. делает на заказ банные печи любой формы, а также гаражные, уличные ворота. Продает угольники, швеллера, профильные трубы, трубы на забор и ворота. Новый завоз. Емкости из нержавеющей стали, прицепы на мотоблоки, сетка рабица. Доставка. Обращаться по тел.: 8-919-655-21-51 (Моргауши, бывший плодокомбинат). 4-5.

Продаю керамзитобетонные блоки 20х20х40 см, гравмассу, песок с доставкой. Тел.: 8-902-327-66-95, 67-66-95. 2-5.

КРЕДИТНЫЕ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЕ КООПЕРАТИВЫ ГРАЖДАН
“АГРОКРЕДИТ”, “ЗАРЯ-КРЕДИТ”
ПРЕДОСТАВЛЯЕМ КРАТКОСРОЧНЫЕ
ЗАЙМЫ
Новые виды быстрых доверительных займов до 2 000 руб. сроком до 1 мес.
“До получки”, “До пенсии”
Новый вид СБЕРЕЖЕНИЙ сроком на 1 мес.
от 1 000 до 100 000 руб.
Адреса: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4
тел.: 62-8-13
с. Б. Сундырь, ул. Советская, д. 23
тел.: 69-2-53
Является членом Республиканского Союза КПКГ
Услуги предоставляются пайщикам кооператива

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-5.

Требуются парикмахеры с опытом работы в с. Моргауши ФСК «Сывлăх». Зарплата достойная. Обращаться по тел.: 8-960-307-50-88. 2-2.

Продажа пиломатериала, хвойный (сосна, ель), лиственный (береза, осина) любого размера, любого качества, брус, жерди, баланс, подтоварник. Заказ на срубы оцилиндрованные. С доставкой на дом. Цена договорная, ниже рыночной. Тел.: 8-905-379-41-64. 1-4.

Продаю телегу конную. Тел.: 8-905-344-47-35.

Продается мотоцикл Урал ИМЗ-8. ЮЗ-30 1987 года выпуска, цвет темно-зеленый, на отличном ходу.
Тел.: 8-952-023-10-09.

Памятники: изготовление и установка за счет МО РФ бесплатно участникам ВОВ, умершим с 12 июня 1990 г. Принимаем заказы на организацию похорон. Действует рассрочка. Работаем без выходных. Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4, здание «Дома быта», 1 этаж.
Тел.: 8(83541)62-7-30, 8-905-029-31-93, 8-835-235-05-61. 1-2.

Пăрусем, сурăхсемпе такасем туянатпăр.
Тел.: 8-903-063-07-57.

Участница долевой собственности Иванова Нина Николаевна, 29.10.1971 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Идагачкасы, ул. Зеленая, д. 3, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 2,56 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.
2. Ивановой Нине Николаевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Идагачкасы, ул. Зеленая, д. 3.

Участник долевой собственности Паргеев Андрей Иванович, 24.08.1975 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Идагачкасы, ул. Восточная, д. 9, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 1,28 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.
2. Паргееву Андрею Ивановичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Идагачкасы, ул. Восточная, д. 9.

Участник долевой собственности Колесников Афанасий Порфирьевич, 29.03.1946 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Нижний Томлай, ул. Овражная, д. 7, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 2,56 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.
2. Колесникову Афанасию Порфирьевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Нижний Томлай, ул. Овражная, д. 7.

Участница долевой собственности Алексеева Клавдия Гавриловна, 06.11.1930 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, с. Акрамово, ул. Центральная, д. 45, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Герой», участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:180701 площадью 1,35 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.
2. Алексеевой Клавдии Гавриловне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, с. Акрамово, ул. Центральная, д. 45.

Участник долевой собственности Алексеев Виталий Леонидович, 16.11.1963 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, с. Акрамово, ул. Центральная, д. 45, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Герой», участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:180701 площадью 2,70 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.
2. Алексееву Виталию Леонидовичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, с. Акрамово, ул. Центральная, д. 45.

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97. 5-8.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерў ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерў ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. Тихонов.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1,5 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 05.06.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3850.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерў ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.